23-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ЯНВАРЬ
10
ВЫРСАРНИКУН
8(6245) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

Уйра юр тытса хӑварни—тырпулӑн тухӑҫлӑхне ӳстерет

Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илесси тырӑсене ӳсме лайӑх майсем туса панинчен килет. Вӑйлӑ тырпул туса илес тесен, ҫав майсене пурне те туса парас пулать. Стахановецсем, малта пыракан колхозсем ҫав майсене вӑхӑтра пурнӑҫласа ҫулран ҫул тухӑҫлӑрах тырпул туса илеҫҫӗ. Вӗсем ҫӗре тарӑн сухаласа кӑпкалатаҫҫӗ, тӗрлӗрен удобренисем нумай хурса ҫӗре ҫемҫетеҫҫӗ, тӑпрара нӳрлӗх нумайрах упраса хӑварас тата калчасене сивӗрен упрас тесе, хӑйсен уйӗсенче юр тытса хӑвараҫҫӗ.

Саратоври опытлӑ станцин 9 ҫул хушшинчи сӑнавлӑ ӗҫӗ юр сийӗ кӗрхи тырӑсен тухӑҫне ӳстерни ҫинчен акӑ мӗн кӑтартса панӑ. Юр тытса хӑварман ҫулсенче кӗрхи тырӑсен тухӑҫлӑхӗ гектартан 15,3 центнер, юр тытса хӑварнӑ ҫулсенче 21,3 центнер чухлӗ пулнӑ. Шупашкар районӗнчи «Осоавиахим» колхоз 1942 ҫулта вӑтам шутпа кашни гектартан 18,3 центнер тырӑ туса илчӗ. Вӗсем иртнӗ хӗлле хӑйсен уйӗсенче юр нумай тытса хӑварчӗҫ, кӑҫал та ҫакӗҫе тимлӗн туса пыраҫҫӗ. Анчах та тырпулӑн тухӑҫлӑхӗ ӳсе пырасси юр тытса хӑварнинчен ҫеҫ килет тесен тӗрӗс мар пулнӑ пулӗччӗ. Паллах, вӑл ытти ӗҫсене тӗрӗс туса пынинчен те килет. Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ӳстермелли майсене туса паракан мероприятисенчен пӗри вӑл — уйсенче юр тытса хӑварасси.

Уйра юр тытса хӑварни ҫурхи тырӑсемшӗн ҫеҫ мар усаллӑ, кӗрхи тырӑсен тухӑҫлӑхне ӳстерессинче те вӑл пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ пулса тӑрать. Юр сийӗ мӗн чухлӗ хулӑм, ҫавӑн чухлӗ тӑпрара нӳрлӗх нумай пулать. Кунсӑр пуҫне тата хулӑм юр айӗнче калчасем те лайӑх упранаҫҫӗ. Юр сийӗ ҫӗр питне ӑшӑтать. Тӗслӗхрен, сывлӑшра 12 градус сивӗ тӑрать пулсан, икӗ пӳрне хулӑмӗш юр сийӗ ҫӗре 4 градус таран ӑшӑтать, тепӗр майлӑ каласан, сывлӑшра 12 градус сивӗ пулсан, юр айӗнче сивӗ 8 градус ҫеҫ пулать. Юр сийӗн хулӑмӗшӗ 15 сантиметр пулсан, сывлӑшри 20 градуслӑ сивӗ тӑпра ҫинче 5 градус ҫеҫ пулать. Юр сийӗн хулӑмӗшӗ 60—66 сантиметр чухне вара сывлӑшра сивӗ 40 градуса ҫитет пулин те тӑпра ҫинче сивӗ 2 градус ҫеҫ пулать.

Ҫакӑнтан ӗнтӗ юр тытса хӑварнин усси мӗнчухлӗ пысӑк пулни уҫҫӑнах курӑнать. Юр нумай тытса хӑварни тивӗ ҫулта та тухӑҫлӑ тырпул ӳстермелӗх тӑпрара нӳрлӗх хӑварать, калчасене сивӗрен лайӑх упраса хӑварать.

Чылай колхозсем хӑйсен уйӗсенче икӗ метр хулӑмӗш таран юр тытса хӑвараҫҫӗ. Ку вӑл питӗ лайӑх. Ҫакӑн пек чухне пухнӑ юр тӑпрашӑн усӑллӑ пулмалли мерӑсене йышӑнас пулать. Ҫапла тумасан, вӑл ҫуркунне ирӗлсе усӑсӑр юхса кайма пултарать, ӑшӑнса ҫитмен тӑпра нумай шыва пӗтӗмӗшпех сӑхса илеймест. Ҫавӑнпа пӗтӗм шыва тӑпрана сӑрхӑнтарса усӑ курас тесе, малта пыракан колхозсем ҫакӑн пек ӗҫсем туса ирттереҫҫӗ. Ирӗлме пуҫлас умӗн юра, вӑл хӑвӑрт тата пӗр пек ирӗлтӗр тесе, чавса пӑрахаҫҫӗ. Ирӗлнӗ юр шывӗ юхса тухакан вырӑнсене питӗреҫҫӗ.

Юра мӗнле майсемпе тытса хӑвармалла? Пирӗн колхозсенче анлӑн сарӑлнӑ майсенчен пӗри вӑл — щитсем туса лартасси. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Чуваш. ЦИК» колхоз хӑйӗн уйӗсене 1.500 щит ытла туса лартнӑ. Щитсене вӗсем ҫатракапа ыраш уламӗнчен тунӑ, уя шахмӑтла лартса тухнӑ. Шахмӑтла лартнипе юра ҫил вӗҫтерсе каймасть.

Тӑван ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫара нумайрах тырӑ парас тесе пирӗн колхозсен 1943 ҫута тата пысӑкрах тухӑҫлӑ тырпул туса илмелле. Ҫак тӗп задачӑна чыслӑн пурнӑҫлама кӑҫал кашни колхозӑн агротехникӑллӑ мероприятисене вӑхӑтра тата тӗплӗн пурнӑҫламалла. Вырӑнти удобренисене пухса хатӗрлес ӗҫе вӑйлӑн туса пынипе пӗрлех, колхозсен хӑйсен уйӗсенче юр тытса хӑвармалла, ҫак ӗҫе хак паманни пачах пулмалла мар.

Шӑхасан районӗнчи колхозсем юр тытса хӑварас ӗҫе пысӑк тимлӗхпе тума тытӑннӑ. Вӗсем паянхи куна 1.408 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ, уя темиҫе пин щит кӑларса тӑратнӑ. Кувакино районӗнчи колхозсем 860 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ. Ҫавӑн пекех ку ӗҫ Пӑрачкав, Комсомольски тата ытти хӑшпӗр районсенче те лайӑх пулса пырать.

Анчах та ҫак ӗҫе пачах та хакламан руководительсем те тӗл пулаҫҫӗ-ха. Тӗслӗхрен, Йӗпреҫ, Ҫӗмӗрле, Шӑмӑршӑ районӗсенчи колхозсем юр тытса хӑварас ӗҫе пачах тытӑнман.

Йӗпреҫ райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ Чумейкин юлташ «кӑҫал юр нумай, тытса хӑвармасан та юрать» тесе ларать. Ҫакӑн пек сиенлӗ шухӑш-кӑмӑла пӗтермелле. Юр тытса хӑварас ӗҫе кашни колхозӑн халех пуҫӑнмалла.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Январӗн 8-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Январӗн 8-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн **Зимовники** хулипе чугунҫул станцине тытса илнӗ.

Дон шывӗн анатри районӗнче пирӗн войскӑсем наступлени туса пырса, **Новый Мир, Алексеев, Медвежка, Нижний Вязовый, Верхний Вязовый, Федоровка, Владимиров, Беляев, Чумаков, Кумшак** ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене тытса илнӗ.

Ҫурҫӗр Кавказра пирӗн войскӑсем **Ново-Павловская** ятлӑ район центрне, **Никольское, Горькая Балка, Правокумский, Сизов, Ново-Средний, Матигоринский, Орловский, Старо-Марьинский, Псыхурей, Марьинская, Куба** ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене тата **Зольский** ятлӑ чугунҫул станцине тытса илнӗ.

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступленилле ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Январӗн 7-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 5 танкне тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине ҫитти пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 9 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен 6 складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине икӗ ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградӑн заводсем вырнаҫнӑ районӗнче пирӗн штурмлакан отрядсем тӑшманӑн 9 блиндажне тытса илнӗ тата противникӑн укрепленийӗсен узелне ҫаварса илнӗ. Ячкевич юлташ ертсе пыракан оруди расчечӗ тӗл персе нимӗҫ чаҫӗн штабне аркатса тӑкнӑ. Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн боецсем 16 окопа йышӑнса илнӗ, противникӑн 300 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен 2 танкне персе ҫӗмӗрнӗ, 13 пулемет тата 64 винтовка тытса илнӗ.

* * *

Дон шывӗн анатри районӗнче пирӗн войскӑсем наступлени туса пынӑ. Противник вӑйлӑн хирӗҫ тӑрать, час-часах вӑл контратакӑсем тӑвать. Пирӗн чаҫсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янӑ тата ҫапӑҫса пырса халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Халӑх пурӑнакан пӗр пысӑк пункт патӗнче нимӗҫ танкӗсем пирӗн пехотӑна хирӗҫ умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ хутчен контратака тунӑ. Артиллеристсемпе бронебойщиксем, нимӗҫ танкӗсем ҫине ҫил-тӑвӑллӑн персе тӑрса, вӗсене пирӗн ҫапӑҫу речӗсем патне ҫывӑхарма паман. Артиллери пенипе хӳтӗленсе, пирӗн боецсем халӑх пурӑнакан пункта ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ та ҫав хӳтӗленӗ гарнизона аркатса тӑкнӑ. Нимӗҫсен 600 салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ. Тӑшманӑн 9 танкне сунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ, 7 оруди, 24 пулемет, 16 автомашина, 2 радиостанци тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Тепӗр участокра Н-ски соединенин боецӗсем халӑх пурӑнакан 3 пункта йышӑнса илнӗ тата йышлӑ трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем хӑйсен рубежӗсене тӗреклетнӗ, вӗсен пӗр пайӗ противникӑн контратакисене сирсе тӑнӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем нимӗҫ пехотипе танкӗсен йышлӑ вӑйӗсем тунӑ контратакӑна сирсе янӑ, ҫавӑн чухне 200 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 орудие пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра нимӗҫсен моторизованнӑй пехотипе танкӗсем пирӗн войскӑсем тӑракан вырӑна савӑлланса кӗрсе кайнӑ. Совет чаҫӗсем хирӗҫ пырса ҫапса гитлеровецсене сирсе янӑ та, вӗсене хӑваласа пырса, противникӑн тӗреклетнӗ позицийӗсене йышӑнса илнӗ. Нимӗҫсен 2 танкне пӗтерсе тӑкнӑ тата гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫити вӗлернӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ.

* * *

Ҫурҫӗр Кавказра совет войскисем, противник хирӗҫ тӑнине сирсе ярса, ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Пӗр участокра совет танкисчӗсем нимӗҫ чаҫӗсен ҫапӑҫу речӗсене татса кӗрсе, гитлеровецсене тылран та, флангсенчен те атакӑланӑ. Ҫапӑҫура тӑшманӑн 400 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. 80 автомашина, 50 миномет тата винтовкӑсем, пистолетсем, боеприпассем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна илнӗ. Тепӗр участокра Н-ски часть халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илсе, противникран трофейӑсем нумай тытса илнӗ, трофейӑсем хушшинче 19 танк, 110 автомашина, 26 пулемет, продовольстви склачӗ тата япаласен 3 склачӗ пур.

* * *

Украинӑри партизансен отрячӗ, пӗр уйӑх хушши ҫапӑҫса, нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ. Партизансем пӗр чугунҫул станцине пырса кӗнӗ те горючи тултарнӑ 12 цистернӑна сирпӗнтерсе янӑ. Кунсӑр пуҫне, совет патриочӗсем аэродромра нимӗҫсен 2 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ тата 3 складне ҫунтарса янӑ. Тепӗр отрядри партизансем нимӗҫсен ҫар эшелонӗ кӗпер урлӑ каҫнӑ вӑхӑтра ҫав кӗпере сирпӗнтерсе янӑ. Паровоз тата 12 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Январӗн 8-мӗшӗнче Берлинри радио нимӗҫсене ҫапла каласа тӗлӗнтернӗ: «Январӗн 7-мӗшӗнче каҫхине Берлинра ҫакӑ паллӑ пулса тӑнӑ: «Германи войскисем Хӗвелтухӑҫ Кавказра, малта тӑракан опорнӑй пунктсене хӑварса, фронтӑн линине ерипен кӗскетсе пыраҫҫӗ. Советсем енчен ҫапӑҫӑва танксен йышлӑ вӑйӗсене кӗртсе янӑ пулсан та, совет войскисем Германин хыҫалта пыракан чаҫӗсене атакӑлани ӑнӑҫуллӑ пулман».

Пурте пӗлеҫҫӗ: Хӗрлӗ Ҫар Ҫурҫӗр Кавказра темиҫе кун хушши наступлени туса 110—130 километр малалла кайнӑ, вӑл Алагир, Ардон, Малгобек, Моздок, Нальчик, Прохладный, Майское хулисене тата халӑх пурӑнакан ытти йышлӑ паха пунктсемпе чугунҫул станцийӗсене йышӑнса илнӗ, вӑл трофейӑсене нумай тытса илнӗ тата нумай ҫынна тыткӑна илнӗ. Гитлеровецсен войскисем Ҫурҫӗр Кавказра каялла чакни Берлинра январӗн 7-мӗшӗнче каҫхине ҫеҫ паллӑ пулса тӑнӑ пулать вара. Паллах ӗнтӗ, Ҫурҫӗр Кавказра нимӗҫсем каялла чакнине гитлерла командовани тахҫанах пӗлнӗ, анчах вӑл, Германи халӑхне тӗрӗссине каласшӑн мар пулса, Германи войскисем чакни ҫинчен нумай вӑхӑт хушши пӗр сӑмах та каламан. Каялла чакнине урӑх пытарса тӑма май ҫук пулса тӑрсан, гитлерла пуҫлӑхсем ун ҫинчен пӗр-ик сӑмах каласа хунӑ, анчах та вӗсем каллех ӑнланмалла мар каланӑ, урӑхла каласан, вӗсем каллех суйнӑ.

Гитлерла шарманщиксем «фронтӑн линине тӳрлетни» ҫинчен юрлакан юрӑ та ҫӗнӗ юрӑ мар. Пӗлтӗрхи хӗле пурте астӑваҫҫӗ-ха; ун чухне Хӗрлӗ Ҫар, нимӗҫсем Мускава атакӑланине сирсе ярса, наступлени турӗ те нимӗҫ войскисене вырӑнӗ-вырӑнӗпе 400 километр ытла аякалла хӑваласа ячӗ. Ҫавӑн чухне вара гитлеровецсем «фронтӑн линине тӳрлетни ҫинчен» пӗрремӗш хут каларӗҫ. Халӗ Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен фашистла войскисене тепӗр хут вӑйлӑн пыра-пыра ҫапать, вӗсене хӗвеланӑҫнелле хӑвалать. Гитлеровецсем халӗ, пӗлтӗрхи пекех, фронтӑн линине кӗскетни ҫинчен пакӑлтатма тытӑнчӗҫ. Кивӗ юрра ҫӗнӗлле юрласа ячӗҫ. Тӗрӗссипе илсен, Ҫурҫӗр Кавказра тата фронтӑн ытти участокӗсенче те фронт линийӗ вӑл Хӗрлӗ Ҫар улӑштарас тенипе улшӑнса пырать, вӑл гитлерла командовани улӑштарас мар тенине пӑхмасӑр, унӑн планӗсене хирӗҫ улшӑнса пырать.

Хӗрлӗ Ҫар пыра-пыра ҫапнипе каялла чакса пырса, нимӗҫсем фронт линине тӳрлетни ҫинчен пакӑлтатаҫҫӗ, анчах халӗ ӑс-пуҫ тӗлӗшӗнчен тӗрӗс-тӗкӗл тӑракан кашни ҫын пӗлет: гитлерла пуҫлӑхсем фронт линине тӳрлетни ҫинчен калаҫҫӗ пулсан—вӑл вара нимӗҫсене чӑнах та йывӑр килнине пӗлтерет.

Январӗн 9-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 9-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем **Дон** шывӗн анатри районӗнче, **Центральнӑй** фронтра тата **Ҫурҫӗр Кавказра** малтанхи еннеллех ҫапӑҫса пынӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн подразделенисем пӗр участокра противника атакӑланӑ та 40 окопа йышӑнса илнӗ. Гитлеровецсем ҫав окопсене каялла тытса илес тесе контратакӑна пӗр полк таран пехота тата 20 танк кӗртсе янӑ. Пирӗн боецсем хӑйсем йышӑннӑ позицисене паман, вӗсем хаяр ҫапӑҫура нимӗҫсене пысӑк сухату тӳстернӗ. Нимӗҫсен 500 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, 5 танкне ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ, 20 пулемет тата 20 пин ытла патрон тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Дон шывӗн анатри районӗнче пирӗн войскӑсем, противник хирӗҫ тӑнине сирсе ярса, наступлени туса пынӑ. Пӗр участокра нимӗҫсен икӗ пехотнӑй полкӗ наступлени туса пыракан совет чаҫӗсене чарма хӑтланса пӑхнӑ. Темиҫе сехет хушши пынӑ ҫапӑҫура пирӗн чаҫсем, нимӗҫсене 400 ҫынтан кая мар пӗтерсе тӑкса, халӑх пурӑнакан икӗ пункта йышӑнса илнӗ тата трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Тепӗр участокра совет войскисем халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илнӗ тата 11 оруди (вӗсенчен 3-шӗ—хӑй тӗллӗн ҫӳрекеннисем), ултӑ кӗпҫеллӗ 2 миномет, 24 пулемет тата ҫыхӑну пурлӑхӗн складне тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем хӑйсен рубежӗсене тӗреклетнӗ. Великие Луки хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри районра нимӗҫсем пирӗн войскӑсен позицийӗсене хирӗҫ вӑйлӑ контратакӑсем тунӑ. Гитлеровецсем пирӗн оборонӑна татма хӑтланни ӑнӑҫман. Ҫапӑҫура нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пӑшалсемпе, пулеметсемпе персе пирӗн боецсем нимӗҫсен 5 самолетне ӳкернӗ.

* * *

Ҫурҫӗр Кавказра пирӗн чаҫсем ӑнӑҫлӑн наступленилле ҫапӑҫусем туса пынӑ. Совет войскисем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакнӑ чухне противник пысӑк ҫухатусем тӳсет. Халӑх пурӑнакан пӗр пунктӑн тавралӗнче кӑна пирӗн боецсем 2 танк, 3 бронемашина, 6 оруди тата 14 автомашина тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 380 виллине шутласа кӑларнӑ. Тепӗр участокра нимӗҫ пехотин батальонне ҫапса аркатнӑ тата гитлеровецсен вырӑнти ҫынсенчен ҫаратса пухнӑ продовольствин пысӑк обозне тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнче пирӗн снайперсем виҫӗ кун хушшинче противникӑн 400 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Ленинград патне пымалли вырӑнсенче совет зенитчикӗсем нимӗҫсен 2 истребительне персе ӳкернӗ.

* * *

Калинин облаҫӗнчи партизансен отрячӗ юлашки вӑхӑтра нимӗҫсен 157 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ тата противникран продовольствин 4 складне туртса илнӗ. Совет патриочӗсен пысӑк мар ушкӑнӗ чугунҫул ҫинчи кӗпере сирпӗнтерсе янӑ тата, засадӑсенчен персе, противникӑн 3 грузовой автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ҫакӑ паллӑ: гитлеровецсен куҫне ӗнтӗ тахҫантанпах Кавказри нефть вышкисем курӑнса тӑраҫҫӗ. Нимӗҫ командованийӗ Баку хулине 1942 ҫулхи сентябрӗн 25-мӗшӗнчен кая юлмасӑр тытса илесшӗн пулнӑ. Нимӗҫ офицерӗсем нимӗҫ салтакӗсем хушшинче Кавказа тытса илмелли плансем ҫинчен нумай каланӑ. Улталаннӑ нимӗҫ салтакӗсем ҫулла Германие хӑйсен тӑванӗсем патне янӑ ҫырӑвӗсенче вӗсене офицерсем мӗн каланине каласа панӑ. Виллинӗ ефрейторӑн Георг Дукӑн киле ярайман ҫырӑвӗнче ҫапла каланӑ: «Эпӗ халь Майское хулинче тӑратӑп. Пирӗн тӗллев — Баку», тенӗ. Нимӗҫ салтакӗ Георг августӑн 25-мӗшӗнче хӑйӗн ашшӗ-амӑшне ҫапла ҫырнӑ: «Эпир малаллах куҫса пыратпӑр. Тепӗр ҫырӑва эпӗ сире Баку хулинчен ҫырса ярӑп», тенӗ. Гитлеровецсем малтанхи ӑнӑҫусӑрлӑхсем хыҫҫӑнах сахалтарах мӑнкӑмӑлланма пуҫланӑ. Нимӗҫ салтакӗсем хӑйсен малашнехи вӑхӑтра ҫырнӑ ҫырӑвӗсенче савӑнӑҫсӑртарах та савӑнӑҫсӑртарах хыпарсем ҫырса пӗлтернӗ. Нимӗҫ ефрейторӗ Фогт сентябрӗн 19-мӗшӗнче ҫырнӑ ҫырӑвӗнче ҫапла каласа ӳпкелешнӗ: «Вырӑссем тусем ҫинче ҫирӗп лараҫҫӗ. Йывӑр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Вӗсем пире мӗн тери хакла ларассине эпир пӗлместпӗр-ха», тенӗ. Октябрӗн 6-мӗшӗнче нимӗҫ ефрейторӗ Кендлер тепӗр ефрейтор Иосиф Экбауэра ҫапла ҫырнӑ: «Кунта пирӗн те ӗҫсем питӗ начар. Эпир малалла куҫма пултараймастпӑр. Вырӑссен вӑйӗсем ытла та пысӑк... Тусем хушшинчи вӑрҫӑ вӑл—чи йывӑр вӑрҫӑ. Пирӗн пурин те нервсем хавшаса ҫитнӗ ӗнтӗ», тенӗ. Нимӗҫ унтер-офицерӗ Готлиб Кольб—пирӗн Грозныя та, Баку хулине те ӑсӑнмасть ӗнтӗ. Унӑн куҫӗ умӗнче нефть вышкисем мар, нимӗҫ салтакӗсен виллӗ тӑприсем ҫинчи хӗресем тӑраҫҫӗ. Кольб, ноябрӗн 7-мӗшӗнче ҫапла ҫырнӑ: «...Кавказра нимӗҫ салтакӗсен виллӗ тӑприсем питӗ нумай. Нумай ялсенче эпӗ уйрӑм виллӗ тӑприсене кӑна мар, пысӑк масарсенех куртӑм. Пирӗн чи начар пуласса кӗтсе илме хатӗр пулмалла».

Ҫапла ҫырнӑ гитлеровецсем Ҫурҫӗр Кавказра совет войскисем наступлени тума пуҫлаччен. Халӗ, Хӗрлӗ Ҫар пыра-пыра ҫапнипе каялла чакса, нимӗҫсем мӗне те пулсан вӗренсе ҫитӗҫ тесе шутлама пулать.

* * *

Французсен ирӗклӗ стрелокӗсем Лион хӗрринче (Францире) нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен бензин хранилищине ҫунтарса янӑ. Парижри чугунҫул депо вӗсенчен пӗринче юлашки икӗ эрне хушшинче 16 паровоза стройран кӑларнӑ. Орлеан районӗнчи ирӗклӗ стрелоксем нимӗҫсен салтакӗсем ларса пыракан эшелона ӳпӗнтерсе янӑ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ Совет халӑхӗн юратнӑ хӗрӗ, майор, авиаци полкӗн командирӗ — Совет Союзӗн Геройӗ Марина Раскова службӑри ӗҫе тунӑ вӑхӑтра вилин ҫинчен тарӑнӑн хурланса пӗлтереҫҫӗ.

СССР СОВНАРКОМӖ, ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Январӗн 8-мӗшӗнче вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн войскӑсем ЗИМОВНИКИ хулипе чугунҫул станцине тытса илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Танксемпе самолетсем тума 3.387.000 тенкӗ пухнӑ

ЧКАЛОВСКОЕ, январӗн 9-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Январӗн 7-мӗшӗ тӗлне районри ӗҫҫыннисем государство банкӗн уйрӑмне танксен колоннисемпе боевой самолетсен эскадрильине тума 3.387.000 тенкӗ хывнӑ. Вӑл шутран — боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 1.517.000 тенкӗ, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1.796.000 тенкӗ, ыттине танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума пухнӑ. Кзыл Чишмери «Маяк» колхоз членӗсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 500.000 тенкӗ пухса панӑ.

«РОКК» колхозри комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксен пуҫарӑвӗ районра вӑйлӑн сарӑлать. «РОКК» колхоз ҫамрӑкӗсем боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 300.000 тенкӗ пухнӑ. Ҫавӑн пекех «Ҫӑлтӑр» колхоз членӗсемпе комсомолецсем те самолетсен эскадрильине тума 300.000 тенкӗ, Молотов ячӗпе тӑракан, «Красное Знамя» колхозсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем 100.000-шер тенкӗ пухса панӑ. Молотов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Кузнецов юлташ 50.000 тенкӗ, унӑн заместителӗ В. Верешкин юлташ 30.000 тенкӗ, фермӑсен заведующийӗ Егор Наперсткин 25.000 тенкӗ, колхозник Василий Богданов 15.000 тенкӗ, ҫамрӑк бригадир Дарья Наумова 15.000 тенкӗ тата 6 пӑт тырӑ пачӗҫ.

Танксемпе самолетсем тумашкӑн укҫа пухасси малалла та вӑйланса пырать.

В. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомӗн пропагандӑпа агитаци отделӗн заведующийӗ.

„Пищевик Чувашии" ятлӑ танк тума укҫа пухаҫҫӗ

Сталин юлташӑн доклачӗпе тата приказӗпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницӑсен патриотизмла ҫӗкленӗвне йышӑнса илсе, Чӑваш АССР апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссариачӗн системинче ӗҫлекен работниксем «Пищевик Чувашии» ятлӑ танк тумашкӑн укҫа пухма тытӑннӑ.

Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссариатӗнчи тата армансен трестӗнчи служащисем танк тума 8.000 тенкӗ хывнӑ. Апат-ҫимӗҫ промышленность халӑх комиссарӗ Калинкина юлташ—3.000 тенкӗ, унти парторганизаци секретарӗ Михайлова юлташ—1.000 тенкӗ хывнӑ. Выльӑхсем пусакан пунктра ӗҫлекенсем ҫак ӗҫ валли 4.749 тенкӗ пухнӑ. Пункт директорӗ Якубсон юлташ 1.200 тенкӗ панӑ. Шупашкарти пищевиксем пӗтӗмпе 25 пин тенкӗ пухнӑ.

«Пищевик Чувашии» ятлӑ танк тума укҫа пухассине пуҫаракансем ҫак ӗҫе апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсенчи мӗнпур рабочисемпе работницӑсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене хутшӑнма чӗнеҫҫӗ. «Пищевиксем пирӗн халӑхна Хӗрлӗ Ҫар валли апат-ҫимӗҫ продукчӗсем туса кӑларнипе пӗрлех, хӑйсен перекетленӗ укҫине юратнӑ тӑван ҫӗршыва пулӑшас ҫӗре пама тивӗҫлӗ», тесе ҫыраҫҫӗ вӗсем хӑйсен чӗнӗвӗнче.

* * *

Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссариатӗнчи работниксен пуҫарӑвне йышӑнса илсе, «Пищевик Чувашии» ятлӑ танк тума укҫа хывас ӗҫе Шупашкарти макарон фабрикин коллективӗ те хутшӑннӑ. Коллектив ҫак ӗҫ валли икӗ-виҫӗ сехет хушшинчех 17.065 тенкӗ пухнӑ. «Пищевик Чувашии» ятлӑ танк тума фабрикӑри кашни работник вӑтамран хӑйӗн уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ панӑ, чылайӑшсем унтан та ытларах хывнӑ. Сӑмахран, работница Липина, уборщица Красильникова юлташсем 2 уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ, работницӑсем Фиалкина, Фелихова, Малова, Матвеева т. ыт. юлташсем 1,5 уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ панӑ.

«Пищевик Чувашии» танк тума укҫа хывас ӗҫ малалла пулса пырать

Ҫамрӑк патриотӑн паха примерӗ

Калинински районри «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхоз членӗ Никифор Ильич Ильин Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи гвардейски чаҫсенчен пӗринче ылханлӑ нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫать. Унӑн ывӑлӗ 15 ҫулхи Семен Уйкас Юнтапа вӑтам шкулӗн 9-мӗш класӗнче вӗренет.

Ҫамрӑк патриот Семен Ильин, колхозра ҫу каҫипе ӗҫлесе, 200 ӗҫкунӗ тунӑ. Халӗ, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшасси вӑйланса пынӑ вӑхӑтра, Ильин юлташ хӑй ӗҫлесе илнӗ тырпултан Хӗрлӗ Ҫар фондне 5 пӑт тырӑ хывнӑ тата самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 2 пин тенкӗ укҫа панӑ.

Ҫамрӑк патриотӑн Семен Ильин юлташӑн паха пуҫарӑвне ҫамрӑксемпе шкул ачисем хушшинче анлӑн сарас пулать.

Г. П.

Самолетсен „Комсомолец Чувашии" эскадрильине тума

Республикӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксем хушшинче боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлӑ эскадрильине тума укҫа пухас ӗҫ сарӑлсах пырать. Елчӗк районӗнче ҫак ӗҫ валли 174.750 тенкӗ укҫа пухнӑ. Вӑл шутран МТС-ри ҫамрӑксем 59.000 тенкӗ, крахмал заводӗнчи ҫамрӑксем 6.000 тенкӗ пухса панӑ. Трактористсем Спиридонов, Долгов, призывник Казаков юлташсем 1000-шер тенкӗ панӑ.

Самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укҫа пухас ӗҫе Вӑрмар районӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем те активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. «Маяк» колхозри ҫамрӑк колхозниксемпе колхозницӑсем боевой самолетсем тума пурӗ 80.000 тенкӗ хывнӑ. Комсомолӑн колхозри пуҫламӑш организацийӗн секретарӗ Табакова юлташ — 10.000 тенкӗ, комсомолка Трофимова юлташ — 5.000 тенкӗ, колхоз председателӗн заместителӗ, отечественнӑй вӑрҫӑн инвалидӗ Мясников юлташ — 2.500 тенкӗ, комсомолка Васильева юлташ — 1000 тенкӗ панӑ.

Самолетсем тума укҫа пухас ӗҫре ҫавӑн пекех Шупашкар районӗнчи Икасси ялсоветӗнчи «11 лет Чувашии» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем те пример кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем пурӗ 124.000 тенкӗ укҫа хывнӑ. Комсомолӑн колхозри пуҫламӑш организацийӗн секретарӗ Михайлова — 3.000 тенкӗ, комсомолкӑсем Камаева—2.500 тенкӗ, Васильева — 2.000 тенкӗ тата Арсентьева юлташ — 1.500 тенкӗ панӑ.

Г. ПЕТРУХИН.

Чӑвашсен юрӑпа ташӑ ансамблӗн гастролӗ

Иртнӗ ҫулхи декабрӗн 24-мӗшӗнчен пуҫласа кӑҫалхи январӗн 7-мӗшне ҫитиччен чӑвашсен юрӑпа ташӑ ансамблӗ (художествӑллӑ руководителӗ композитор Ф. Лукин) Сӗрнар районӗнче гастрольре пулчӗ. Ансамбль пӗтӗмпе 14 концерт пачӗ. Вӗсенчен 4 концерт район центрӗнче, 10 концерт колхозсенче пулчӗ. Кунсӑр пуҫне шеф концерчӗсем 5 концерт ирттернӗ. Концертсене пӗтӗмпе 6 пин ҫын ытла итленӗ.

Концертсенче чӑваш композиторӗсен Г. Лисков, В. Воробьев, Ф. Лукин, Г. Лебедев юлташсен ҫӗнӗ юррисене юрласа панӑ. Ҫавӑн пекех тата халӑх юррисене, совет композиторӗсен отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫырнӑ юррисене, классикӑллӑ произведенисене юрласа панӑ.

Районри ӗҫҫыннисем, колхозниксемпе колхозницӑсем концертсене пысӑк хавасланса кӗтсе илнӗ.

Леспромхозăн тĕп задачи — ĕç тухăçлăхне ÿстересси

Атăл леҫҫенчи леспромхоз (директорĕ Кармачев юлташ) иртнĕ ҫулта начар мар ĕçлерĕ. Вăл вăрман ĕçĕсен ҫулталăкри планне хатĕрлес енĕпе 126,6 процент, турттарас енĕпе 100,6 процент тултарчĕ. Чугунҫул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли, Хĕрлĕ Ҫар валли ҫунасемпе ытти япаласем тумалли заданисене те ăнăҫлăн пурнăҫа кĕртрĕ. Иртнĕ ҫулăн иккĕмĕш ҫурринче чугунҫул транспортне вутă тăратмалли задание 121 процент тултарчĕ.

Анчах та леспромхоз коллективĕ иртнĕ ҫулхи ҫитĕнÿсемпе лăпланса ларма пăхрĕ пулас,—кăҫалхи ĕççене начар тытăнчĕ. Январьти плана малтанхи пилĕк кун хушшинче хатĕрлес енĕпе 6,5 процент, турттарас енĕпе 8,5 процент ҫеç тултарчĕ. Вăрман касакансемпе турттаракансен ĕç тухăçлăхĕ пачах та ҫителĕксĕр, чылайĕшĕсем хăйсен нормисене тултараймаççĕ. Ҫакă вăл вăрмана пынă ҫĕнĕ рабочисене ĕçе хăнăхтарас тĕлĕшпе начар ертсе пынинчен, ĕç хатĕрĕсем ҫитменнинчен, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсемпе усă курманнинчен килет. Сăмахран, чылай рабочисем лучковăй пăчкăпа касма пĕлмеççĕ, апла пулин те вĕсене вăрман мастерĕсем енчен пулăшу пани сахал-ха.

Атăл леҫҫенчи леспромхозăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур: унăн пункчĕсем пĕр-пĕринчен аякра вырнаçнă. Ҫакă вăл уйрăм пунктсен ĕçне ертсе пырассине йывăрлатать. Ҫавăнпа та производствăллă ыйтусене татнă чух, ĕçри кăлтăксене сирнĕ чух пункт начальникĕсен усăмлăрах та пуҫаруллăрах пулмалла, Шупашкартан мĕн калассине кĕтсе лармалла мар. Анчах хальхи вăхăтра ҫак ҫитменлĕх пур-ха, ăна, паллах, пĕтермелле.

Леспромхозăн Шупашкартипе Кувшинкăри пункчĕсене — Сĕнтĕр районĕ, Етĕрнери пунктне—Етĕрне районĕ тата Сĕнтĕрвăрринчи пунктне—Сĕнтĕрвăрри районĕ ĕç вăйĕ парса тăраççĕ. Хальхи вăхăтра ĕç вăйĕ тăратас тĕлĕшпе Етĕрне районĕ пирки ҫеç сăмах ҫук. Сĕнтĕрвăрри районĕ вара ĕç вăйне планпа палăртнинчен 50 процент ҫеç тăратать.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи партипе совет организацийĕсен леспромхоза ĕçре чăрмав кÿмелле мар, пулăшса пымалла.

Т. ИВАНОВ.

ҪĔНĔ ҪУЛТА ЛАЙĂХРАХ ĔҪЛЕР

Шупашкарти уйрăм ҫынсем валли атă-пушмак ҫĕлекен мастерской коллективĕ хулари ĕҫҫыннисен пурнăҫпа йăлари нушисене тивĕҫтерме тăрăшать. Коллектив иртнĕ ҫулта ҫав тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне 110 процент тултарчĕ, ҫулталăкри планран иртерсе ĕҫҫыннисене 8.945 тенкĕлĕх атă-пушмак юсаса тата ҫĕлесе пачĕ.

1942 ҫулхи декабрьте хăшпĕр йывăрлăхсем пулчĕç пулин те, мастерской уйăхри плана 106 процент тултарчĕ. Плана тултарассишĕн Сабалов, Ходаковский тата Редько стахановецсем уйрăмах тăрăшрĕç. Вĕсем кашни кун хăйсен нормисенчен 2 хута яхăн тухăçлăрах ĕçлерĕç. Стахановец Саметман юлташ вара декабрьти нормăна 272 процент тултарчĕ.

Мастерской коллективĕ умĕнче кăçал татах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Ĕҫҫыннисен ыйтăвĕсене шута илсе, пирĕн кăçал хамăр ĕçе анлăлатас пулать, атă-пушмаксемпе урана тăхăнмалли ытти япаласене ытларах ҫĕлесе тата юсаса парас пулать.

М. М. ЭПШТЕЙН,
Мастерской директорĕ.

Пропагандăпа агитаци ĕçне лайăхрах туса пырар

Сталин юлташăн историллĕ докладне ăнлантарса пама эпир кашни ялсоветĕнчех 10—15 ҫынран агитколлектив организациленĕ. Агитколлективсенче ĕçлеме коммунистсене, комсомолецсене тата партире тăман большевиксемпе совет активне йыхăртрăмăр. Агитаторсен теориллĕ пĕлĕвне ÿстерсе пырас тĕлĕшпе сахал мар канашлусем, семинарсем туса ирттерни. 1942 ҫулта агитаторсен 8 канашлăвне ирттерни. Вăл канашлусенче ҫамрăк агитаторсене опытлă агитаторсен ĕçĕсемпе паллаштарнă, пропагандăн тĕрлĕ меточĕсем ҫинчен каласа кăтартнă.

ВКП(б) райкомĕ ҫумĕнче агитаторсен групни пур. Унта 7 ҫын тăрать. Вĕсем иртнĕ ҫул хушшинче докладсемпе лекцисем 447 хутчен ирттерни. Ҫав докладсемпе лекцисене 22.678 ҫын пулнă. Кунсăр пуҫне райцентрта лекцисем тата докладсем 33 ирттерни, вĕсенче 1.600 ҫын ытла пулнă.

Сталин юлташăн докладне радио тăрăх итленĕ хыҫҫăнах районри партипе совет активĕ колхозсене кайса колхозниксен, служащисен тата вĕренекенсен анлă масси патне ҫитерни.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче парти райкомĕн инструкторĕсемпе агитаторсем валли инструктивнăй канашлу ирттерни. Ҫак канашлу хыҫҫăн агитаторсен йышне комсомолецсем татах активлăнрах хутшăнчĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсем, районри интеллигенци, Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе хавхаланса, ĕçри дисциплинăна ҫирĕплетсе, фронта пулăшассине вăйлатса пычĕç. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татрĕç. Чăрăш Хирлеп ялсоветĕнчи колхозниксем, доклада ăнлантарса панă хыҫҫăн, Хĕрлĕ обоз организацилесе государствăна 40 центнер тырă, 16 килограмм пăратнă ҫу леçсе панă. Ҫавăн пекех Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунист И. Николаев юлташ) ноябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне тырпула ҫапса кĕртнĕ, клевер вăрлăхне акма хатĕрлесе хунă. Халĕ колхоз ҫуракине хатĕрленсе ҫитрĕ, ялхуҫалăх машинисене пĕтĕмпех ремонтласа ҫитерчĕ, аканакан пĕтĕм ҫĕр лаптăкĕ валли вăрлăх сене сортласа хатĕрленĕ. Шĕнер ялсоветĕнчи «Первое Мая» колхоз та (председателĕ коммунист Иванов юлташ) авăна планпа палăртнинчен виҫĕ кун маларах ҫапса пĕтерчĕ. Колхозри 3-мĕш бригада (бригадирĕ В. Кириллов юлташ) Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явсан тепĕр куннех авăн ҫапас плана 158 процентран кая мар тултарса пыма тытăннă. Комсомолецсем Е. Степанова, Д. Романова, Н. Васильев тата ытти юлташсем авăн ҫапса пĕтермесĕр итем ҫинчен татăлмарĕç, нормăна кулленех 150 процентшар тултарса ĕçлерĕç. Ку колхоз акмалли вăрлăх фончĕсене ҫителĕклĕ тараса хывса хăварчĕ. Халĕ колхозниксем вăрлăх сортлаççĕ.

Сталин юлташăн докладне итленĕ хыҫҫăн Шуркассинчи «Социализм» колхоз членĕсем Х. Казаков, Л. Назаров, А. Николаев юлташсем 14 кун хушшинче пысăк вите туса пĕтерни.

Сталин юлташăн доклачĕ вĕренекенсене вĕренÿ пахалăхне ÿстерме, фронта пулăшассине вăйлатма хавхалантарать. Вĕренекенсем танксен «Народный учитель» ятлă колоннине тума укҫа пухма тытăнчĕç. Шĕнертти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем пĕр кун хушшинче танксем тума 250 тенкĕ, Алгазино шкулĕнче вĕренекенсем 850 тенкĕ укҫа хыврĕç. Сталин юлташăн докладне вĕреннĕ май, Калинино педучилищинче вĕренÿ пахалăхĕ ÿсрĕ, дисциплина ҫирĕпленчĕ.

Районри колхозниксемпе колхозницăсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тăвас ĕç валли январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ 1.681.190 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума 68.000 тенкĕ, «Народный учитель» ятлă танксен колоннине тума 12.923 тенкĕ пухрĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 61.600 тенкĕ, Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 54.900 тенкĕ хывнă.

Сталин юлташăн докладне вĕренес ĕç колхоз ҫамрăкĕсемпе комсомолецсем хушшинче те аван пырать. Услапари «Броневик» колхозри ҫамрăксем, Сталин юлташăн докладне вĕреннĕ май, фронта та ытларах пулăшма тытăнчĕç. Колхозри комсомолецсемпе ҫамрăксем Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем валли 31 тир пухрĕç. Хăмăшри Папанин ячĕпе тăракан колхозри комсомолкăсем Ф. Григорьева, Д. Чиркова юлташсем Сталин юлташăн доклачĕ килĕрен ҫÿресе колхозниксене ăнлантарса параççĕ. Ҫапла вара вĕсем агитаци ĕçне туса пынă вăхăтрах, Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем валли 5 тир, пĕр ăшă кĕпе, 4 алшăлли пухса панă. Эльменри Пушкин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем те колхозниксем хушшинче агитациллĕ ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Комсомолка С. Короткова юлташ фермăра ĕçлекенсем хушшинче, Г. Васильев—ытти колхозниксем хушшинче Сталин докладне ăнлантарса параççĕ, Хĕрлĕ Ҫарăн чаплă ҫитĕнĕвĕсем ҫинчен каласа параççĕ. Ҫакăн пек тĕслĕхсем районра сахал мар.

Ĕҫҫыннисем хушшинче агитаципе пропаганда туса пыни ĕçри ҫитĕнÿсене татах та пысăклатать. Ҫавăнпа эпир хамăр умма агитаципе пропаганда ĕçне колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче татах вăйлăнрах туса пырас задача лартрăмăр

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) Калинински райкомĕн секретарĕ

Тăватшар плуг ҫеç юсанă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Районри колхозсем ҫуракине хатĕрлесе тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах колхозсем ялхуҫалăх машинисене юсас, вăрлăх сортлас тата вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнман. Тайçерĕç пайĕ шута илнĕ тăрăх, паянхи кун тĕлне районри 21 тимĕрҫĕрĕн 5 ҫеç ĕçе тытăннă. Вĕсем те калама ҫук майĕпен, васкамасăр ĕçлеççĕ.

Тимĕрҫĕ ҫук колхозсене кашнинех тимĕрҫĕ пур колхозсем тăрăх ҫирĕплетсе тухнă. Апла пулин те, колхозсем плугсене тата ытти ялхуҫалăх машинисене тимĕрҫĕсем патне илсе каймаççĕ. Шупуç ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Шурçырма ялсоветĕнчи «1-ое мая» т. ыт. колхозсем плугсене халĕ те пуçтарса ҫитермен. Вĕсем кĕрхи ҫĕртме тунă хыҫҫăн мĕнле пулнă, ҫавăн пекех лараççĕ. «Смычка» колхоз председателĕ Захаров юлташ, «плугсене халех ремонтлама тытăнатăп» тесе сăмах панă пулин те, ĕçе тытăнман-ха.

Районĕпе илсен, паянхи кун тĕлне пурĕ те 12 —13 плуг ҫеç юсанă. Вăл шутран вара Чадукассинчи «Труженик» колхозри тимĕрҫĕ 4 плуг, Албахтино ялсоветĕнчи «Сила» колхозра 4 плуг, «Унгастрой» колхозра 4 плуг ҫеç юсанă. Ытти колхозсенче ялхуҫалăх машинисене юсама пуҫăнман-ха.

Халĕ вырăнти удобренисене пуҫтарса хатĕрлес тĕлĕшпе уйăхлăх пуҫланчĕ. Анчах районри колхозсем удобренисене хатĕрлеме тытăнман-ха. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах «Жнейка», «Красноармеец», «Трактор», «Красная Чувашия» т. ыт. колхозсем питĕ начар ĕçлеççĕ. Районри ҫĕрĕç пайĕ те колхозсене пулăшса пырас тĕлĕшпе начар ĕçлет. Колхозсенче пулакан агрономсем, ҫитменлĕхсене пĕтерес вырăнне, вĕсене курмасăрах иртсе каяççĕ, колхозăн ĕçĕпе тĕплĕн интересленмеççĕ. Ҫакнашкал йăлăна халех пĕтерсе, конкретнăй ĕçе куҫмалла, колхозсене кулленех практикăллă ĕçре пулăшса пымалла

С. ШАДИН.

—⊙—

Хĕрлĕ Ҫар фондне 4.020 пăт тырă

ТАВАЙ, январĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри малта пыракан колхозсемпе колхозниксем Хĕрлĕ Ҫар фондне тырă хываççĕ. Енерхи кун тĕлне «Красная Чувашия» колхоз членĕсем ҫак ĕç валли 810 пăт, Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 420 пăт, Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 255 пăт хыврĕç. Ҫапла вара районĕпе Хĕрлĕ Ҫар фондне хывма пурĕ 4.020 пăт тырă пухнă.

В. ИЛЬИН.

Колхозниксен отвечĕ

Халăхсен ҫулпуҫĕ Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксене саламлани тата Хĕрлĕ Ҫар ячĕпе тав туни районри кашни колхозникăн чĕрине ăшшăн кĕрсе вырнаçрĕ, тата хĕрÿллĕнрех ĕçлеме хавхалантарчĕ.

— Тăван Хĕрлĕ Ҫарăн ҫĕнтерÿллĕ ĕçĕсемшĕн эпир пурне те пама хатĕр, — теççĕ колхозниксем.

Сталин юлташăн саламне илсенех нумай колхозсенче митингсем пулса иртрĕç. «Анит» колхозра митинга 180 колхозник пухăнчĕ. Колхоз председателĕ Николаев юлташ Хĕрлĕ Ҫар фондне планран ирттерсе 35 центнер тырă хывма, колхозниксене хăйсен тупăшĕнчен тырă уйăрса пама чĕннине митинг пĕр ҫын пек пулса кăмăллаca ырларĕ.

Митинга пурĕ 14 колхозник сăмах каларĕç. Вĕсен сăмахĕнче пĕр тĕллев хĕмленсе тăрать. Вăл — Хĕрлĕ Ҫара пулăшу парасси, тăшмана хăвăртрах ҫапса ҫĕмĕресси.

— Манăн пĕр ывăл тăшмана хирĕç паттăррăн ҫапăҫса пуҫне хучĕ, — терĕ митинга колхозник В. Козлов юлташ. — Иккĕмĕш ывăл аманнă. Хамăн ватăлăха сулăннă ҫула пăхмастăп эпĕ, тăшмана пĕтерсе тăкмасăр канлĕ ватăлăх пулмĕ пирĕн. Хăвăртрах тĕп пултăр тăшман, ҫĕнтерÿ тума Хĕрлĕ Ҫара пысăкрах пулăшу парар! Эпĕ Хĕрлĕ Ҫар фондне хывма ҫĕр килограмм тырă паратăп, сире те, колхозник тантăшсем, ҫак ĕçе хутшăнма чĕнетĕп.

И. Григорьев, М. Яковлев, С. Харитонов, П. Егоров, Е. Иванов, В. Андреев, П. Капитонов колхозниксем ҫак чĕнÿ ҫине митинграх ответлерĕç. Вĕсем пурте Хĕрлĕ Ҫар фондне ҫĕршер килограмм тырă хывма пулчĕç.

Митинг пĕр саслăн Хĕрлĕ Ҫар фондне планран ирттерсе 105 центнер тырă хывма, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума панă укҫан хисепне 100 пине ҫитерме йышăнчĕ.

Сталин юлташăн саламĕ колхозниксене ҫĕнĕ вăйпа ĕçлеме ҫĕклерĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш ҫуракине колхозсем большевикла хастарлăхпа ирттерме хатĕрленеççĕ. Иртнĕ ҫул паха ҫитĕнÿсем тунă пулсан, кăçал пысăк тырпул туса илессишĕн кĕрешÿ тата хĕрÿллĕрех пулать. Фронт ыйтнине тивĕҫтерме ялхуҫалăхĕнчи пĕтĕм халăх кĕрешĕве тухать.

Чăрăшçырма ялсоветĕнчи «Коминтерн» колхозра пулнă митинга ватă колхозник Тибяков юлташ пĕтĕм колхозниксен шухăш-кăмăлне уçса ҫапла каларĕ:

— Тăван ҫĕршыва валли эпĕ тăватă ывăл, пĕр хĕр ÿстертĕм, вĕсем тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхне сыхласа хăвареç. Эпĕ хам 71 ҫулта, карчăкăм — 68 ҫулта. Анчах пирĕн те тăшмана тĕп тума вăй пур-ха. Пĕрлешÿллĕ ĕçре пирĕн вăй та ҫамрăксен вăйĕнчен кая мар. Кăçал та тăван Хĕрлĕ Ҫара валли тырпула ытлăн-ҫитлĕн туса парăпăр. Хĕрлĕ Ҫар фондне эпир карчăкпа 50 килограмм тĕштырă хыватпăр.

«Коминтерн» колхоз членĕсем хăйсен кăçал ĕçлесе илнĕ тупăшĕнчен Хĕрлĕ Ҫар фондне 71 центнер тырă пачĕç, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 25 пин тенкĕ укҫа пачĕç.

И. РОМАНОВ,
ВКП(б) Вăрмар райкомĕн секретарĕ.

Ют ҫĕршывсенче

„Мĕншĕн Хĕрлĕ Ҫар ҫĕнтерет"

Америка корреспонденчĕн статьи

ТЕГЕРАН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Чикаго дейли ньюс» хаçатăн паллă корреспонденчĕ Лейланд Стоу, чылай вăхăт хушши ССР Союзĕнче пулнăскер, Канрта тухакан «Парад» журналра «Мĕншĕн Хĕрлĕ Ҫар ҫĕнтерет» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Статьян авторĕ ҫапла ҫырать: «Хĕрлĕ Ҫар ҫапăҫакан фронтра пĕр эрне хушши кăна пулсан та, ССР Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем нумай уйăхсем хушши татти-сыпписĕр хаяррăн ҫапăҫса пынă хыҫҫăн Германин вăрçă машинине мĕнле майла малалла чарса тăни, ăна сире-сире пăрахни тата аркатса пыни паллă пулса тухать. Пĕрремĕш класри кирек-мĕнле ҫара та тивĕçли Хĕрлĕ Ҫарăн пурте пур. Унăн нумай вăхăт хушши вĕрентсе хатĕрленĕ профессиллĕ офицерсен пысăк йышлă кадрĕсем пур. Унăн вырăссен авалхи традицийĕсене сыхласа тăракан ҫавтери чаплă артиллеристсем пур. Унăн танксемпе самолетсене ҫапăҫура мĕнле ăнăçлăрах усă курмалли майсене нумай ҫулсем хушши вĕренсе алла илнĕ офицерсемпе инженерсем пур. Хĕрлĕ Ҫарăн событисене малтанах курса тăракан тата хальхи вăхăта тивĕçлĕ пек шухăшлама пĕлекен тимлĕхлĕ руководство пур. Вырăссен ҫарне халиччен хытса ларнă вăрçă теорийĕсемпе тăлланман ҫынсем организациленĕ. Ҫакă вăл — ҫапăҫура ҫавăрăнăçуллă пуласси тата обстановкăна пĕлсе усă курасси фронтра курнă офицерсен нумайĕшĕсен паллă енĕ пулса тăрать. Хĕрлĕ Ҫарăн салтакне илессĕн, унăн ятне пысăк саспаллирен ҫырмалла. Эпĕ ҫав вăрçăн ҫичĕ фронтĕнче, пĕр-пĕринчен аякра тăракан фронтсенче, пултăм. Анчах вăй-хăватпа шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен вырăс салтакĕсенчен кам та пулин вăйларах пулнине тĕнчере эпĕ урăх кураймарăм. Хĕрлĕ Ҫар ҫапăҫури ҫавтери пысăх хавхаланупа палăрса тăрать. Вăл ҫавтери лайăх тумланнă. Хĕрлĕ Ҫаршăн мирлĕ вăхăтра та совет халăхĕ пĕтĕм вăйне хурса тăрăшнă, халĕ ăнтĕ, вăрçă вăхăтĕнче, ССР Союзĕн мĕнпур экономики ҫаршăн ĕçлет. Ҫав фактсем ăнтĕ вырăс салтакĕ паянхи кун мĕншĕн пачах та ҫĕнĕ ҫын пулса тăнине ăнлантарса параççĕ».

Лăпкă океан ҫинчи вăрҫă

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ Японин Ҫĕнĕ Гвинейăри Лае порчĕ патнелле пыракан 10 карапĕн караванне темиçе хут та атакăланă. Войскăсем лартса пыракан пĕр карапа, 14.000 тонна водоизмещениллĕскере, путарнă. Тепĕр пысăк карапа вут тивертнĕ. Бомбардировщиксен нумай соединенийĕсем Н. Британи, Н. Георгия тата Букенвиль утравĕсем ҫинчи стратеги тĕлĕшĕнчен паха пулса тăракан темиçе объекта атакăланă. Ҫапăҫусенче японецсен 18 самолетне персе ÿкернĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Колхоз ҫуракине хатĕрленет

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 1942 ҫулта паха тĕслĕхсемпе ĕçлерĕç. Тырпулăн тухăçне ÿстерчĕç, ялхуҫалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене хăвăрт туса пычĕç. Колхоз кăçал тата пысăкрах тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешет. Халь кашни бригадăрах ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿ ĕç пырать. А. Калистратова, Ф. Яковлева, Д. Игнатьева колхозницăсем пуçарнипе, нумаях пулмасть уйра 25 гектар ҫинче юр тытса хăварнă.

Вăрлăхсене сортлама колхоз правленийĕ 8 ҫынран бригада организациленĕ. Паянхи куна бригада вăрлăхсене сортласа пĕтерчĕ. А. Николаева, М. Мужаева, М. Николаева, Ф. Димитриева юлташсем триерпа кулленех 15 центнер тырă сортланă. Триумфпа ĕçлекен Е. Шурпакова, А. Гордеева, О. Козлова, А. Ракова юлташсем пурĕ 30 центнер вăрлăх сортласа хатĕрленĕ. Тасатса сортланă вăрлăхсен шăтас пахалăхне лабораторинче тĕрĕсленĕ, вĕсен пахалăхĕ лайăх.

Колхоз тырра иртнĕ ҫулта та планран ирттерсе 80 гектар акнă, кăçал та планпа палăртнинчен нумайрах акма хатĕрленет. Ҫуракине тĕплĕн хатĕрленсе кăтартуллăн ирттерессишĕн кашни колхозник тăрăшса ĕçлет. Тимĕрç лаççинче кăнтăрла та, каçхине те хĕрÿ ĕç пырать.

А. Яковлев, Ф. Коротков, И. Матвеев юлташсем ҫĕнĕрен 13 сÿре тунă, 30 сÿре юсанă. Шкулта вĕренекен ачасем уроксем пĕтнĕ хыҫҫăн лаша кÿлсе килсем тăрăх кĕл пухма тухаççĕ.

С. Ш.

Пирĕн землянсем

Лейтенант Николай Никитин

Вăл 1913 ҫулта Ҫĕмĕрле районĕнчи Ҫĕнкас ялĕнче ҫуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан, комбинатри ФЗУ шкулне кĕнĕ. Унтан вăл лайăх вĕренсе тухнă та производствăра станочник пулса ĕçлеме тытăннă. Каярахпа ăна вăрманпромхоза бракера куçараççĕ.

Ҫакăн пек Николай Егорович Никитинăн Хĕрлĕ Ҫар ретне каяччен хунҫулĕ.

Комбинатра унпа пĕрле ĕçленĕ рабочисем ăна лайăх астăваççĕ. Ҫамрăк пулсан та, вăл ĕçре пример кăтартнă. Унăн ячĕ яланах Хĕрлĕ хăма ҫинче тăнă.

1935 ҫулта Николай Егорович Никитин Хĕрлĕ Ҫар ретне каять. 1939 ҫулта вăл Хĕвеланăç Украинăпа, Хĕвеланăç Белорусси халăхĕсене ирĕке кăларнă ҫĕрте, каярахпа белофинсене аркатнă ҫĕрте пулать. Вăрçă чарăнсан командирсем хатĕрлекен курсра вĕренет, кĕçĕн лейтенант пулса тăрать.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансанах, Никитин юлташ фронта лекет. Ҫапăҫăвăн малтанхи кунĕсенчех вăл нимĕç оккупанчĕсене хирĕç мĕнпур вăйне, пултарулăхне хурса кĕрешет. Тăшман социализмлă ҫĕршывăн тĕп хули — Мускав патнелле ҫывхарнă вăхăтра, командовани ăна тăшман танкĕсене пĕтерекен отрядăн командирĕ тăвать. Никитин юлташ вăл ҫапăҫусенче паттăрлăх кăтартать, хăйĕн примерĕпе ытти боецсене хавхалантарать.

— Хыҫра Мускав, унта пирĕн юратнă ҫулпуç Сталин. Пурнăç та шел мар, тăшмана унта ямастпăр, — тет вăл боецсене.

Тăшманăн танкĕсем атака тума чарăнсан, Никитин юлташа разведка тума та яраççĕ. Хисеплĕ командир хăйне панă задание яланах тивĕçлĕн пурнăçлать. Ҫакна кура ăна каярахпа разведчиксен отрячĕн командирĕ тăваççĕ.

Пирĕн часть вырнаçнă вырăнтан инçех мар пĕр ялта нимĕçсем тăнă пулнă. Ҫынçиен гитлеровецсем вăл яла пĕтĕмпех ҫунтарса янă, унта мĕн пурĕ те 2 ҫурт ҫеç юлнă.

Командовани Никитин юлташа ҫак яла вырнаçнă нимĕçсен «чĕлхине» тытма задани панă.

— Ялтан инçех мар нимĕçсен дозорĕ тăрать. Сержант Баринов юлташ, сирĕн задача — ҫав дозор хыçне тухса ун патнелле пырасси, май пулсан, ăна вăрттăн, сас тумасăр, тытасси. Эпир ку енчен пыратпăр, — каласа панă Никитин юлташ хăйĕн боецĕсене. Ҫак вăхăтрах 6 красноармееца ялти икĕ ҫурта сылтăмран ҫавăрса илме хушнă. Дозора чĕррĕн тытаймасан, ăна Бариновăн хăвăртрах пĕтермелле пулнă. Ҫак самантрах ҫурта вырнаçнă нимĕçсем ҫине тапăнмалла пулнă.

Ку каçхине ҫанталăк тĕттĕмех мар тăнă, анчах сивĕ пулнă.

Операци ăнăçлăн иртнĕ. Чăнах, сержант Баринов хăйĕн юлташĕпе нимĕç дозорне чĕрĕлле тытайман, вăл хăйсене асăрханă пирки тÿррĕн персе вĕлернĕ. Ҫак вăхăтра 6 красноармеец ҫуртсене сулахай енчен, ытти 11 красноармеец ҫурта умран ҫавăрса илнĕ. Пĕр нимĕç те тарса хăтăлайман, пÿрт ăшнелле тарса кĕнĕ. Вăхăт нумай та иртмен, пирĕн боецсем пÿрт еннелле тÿррĕн пеме тытăннă, унта чупса кĕнĕ. Пÿртре 25 фашист вилли йăванса выртнă, 5-мĕшĕ хăранипе ним калаймасăр чĕтресе тăнă. Вĕсене пирĕн чаҫа илсе кайнă.

— Задание пурнăçланă, урăх задани парасса кĕтетпĕр, — рапортланă Никитин юлташ командование.

Нимĕçсем Е. ятлă яла ҫирĕппĕн вырнаçса ларнă пулнă. Вĕсем ҫакăнта хĕл каçма шутланă пулас. Вĕсем кашни ҫурта укреплени тунă, пÿртсем айне подвалсем алтнă. Пирĕн чаçсем ҫак яла пĕрре кăна мар атакăласа пăхнă, анчах ăна йышăнма май килмен.

Никитин юлташ ҫав ялти тăшманăн вăйне тĕпчесе пĕлме задани илнĕ. Ку хутра вăл задание пурнăçлама пĕтĕм отряда илсе кайнă. Ҫанталăк тĕттĕмленсе ҫитсен, отряд шăппăн хырăмпа шуса малалла куçнă. Кашни боецăн аллинче автомат тата граната пулнă.

Отряд чăн малтан ял ҫумĕнчи ҫырма варринче тăракан нимĕçсен часовойĕ патне шуса пынă та, пĕр сас кăлармасăр ăна штыкпа чиксе вĕлернĕ. Ун хыҫҫăн яла чупса кĕрсе чÿречесенчен пеме пуçланă. Гранатăсемпе автоматсем пĕр вĕçĕмсĕр ĕçленĕ. Хăраса ÿкнĕ гитлеровецсем, ним тума аптăранă май, ҫапăçăва хутшăнмасăрах ялтан туха-туха тарнă, 2 пулемет, 5 телефон аппарачĕ т. ыт. те пăрахса хăварнă. Ҫапла вара Никитин юлташ командир пулса ертсе пыракан 40 ҫынлă отряд пĕр ялтан 400 яхăн гитлеровеца хăваласа кăларнă, яла тăшмансенчен тасатнă.

* * *

Кун пек ĕçсем Никитин юлташăн фронтри пурнăçĕнче сахал мар. Тăван ҫĕршывăн хисеплĕ патриочĕ командованин кашни заданинех ăнăçлăн пурнăçлама тăрăшнă.

Совет правительстви чăваш ачин — Никитин юлташăн хастарлă ĕçне пысăккăн хакларĕ. Ăна фронтра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Ҫалтăр орденĕ парса наградăланă.

Халĕ вăл вăхăтлăха Ҫĕмĕрлере канса пурăнать. Кунта та вăл всевобуч подразделенинчи боецсене фронтри пек хастарлă та хăюллă пулма вĕрентет.

— Землякcене ҫакна шантарса калама пултаратăп: тăшмана хирĕç эпĕ татах та хастарлăрах, вăйлăрах ҫапăçма сăмах паратăп. Тăван ҫĕршывшăн хамăн пурнăҫа та пама хатĕр, — тет лейтенант Н. Е. Никитин.

Х. ЛИСИН.

Чувашский Обком РОКК и станция переливания крови проводят 14 января 1943 года

СЛЕТ ДОНОРОВ.

Повестка дня: 1. Доклад наркома здравоохранения ЧАССР тов. Лихачева, 2. Выступления доноров и участников отечественной войны.

В конце слета будет постановка: «Парень из нашего города».

Начало в 7 часов вечера. Билеты получать на станции переливания крови.

ОК РОКК и Станция Переливания крови.

Чувашской конторе Главзаготпенькопрома требуется: бухгалтер, экономист, ответственный исполнитель по сбыту и транспорту. Предоставляется квартира.

Обращаться: гор. Чебоксары, улица Тельмана, дом № 6 (Кировский поселок). Тел. № 5—45 1 звонок.

Ибресинская лесощепная база Чувашпотребсоюза ЛИКВИДИРУЕТСЯ

Организации и лица, имеющие к базе претензии, обязаны предъявить таковые до 1-го февраля 1943 года.

Ликвидком.

Чувашской конторе главзаготскот центра срочно требуются на постоянную работу главные и старшие бухгалтера для работы в райконторах и машинистка.

За справками обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Канашская, 21.

Требуются главный бухгалтер, старший бухгалтер и счетовод-кассир. Обеспечиваются жилплощадью.

Обращаться: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 7, Управление Землеустройства.

Поволжский Лесотехнический Институт имени А. М. Горького

объявляет набор учащихся на все курсы заочного отделения факультетов: 1) Механизации лесоразработок и лесотранспорта и 2) Лесного хозяйства.

Институт готовит инженеров лесного хозяйства и инженеров-технологов по механизации лесоразработок и лесотранспорта. Срок обучения 5 лет. Условия обучения общие для заочных высших учебных заведений.

Заявления с приложением документов об образовании, автобиографии и двух фотокарточек направлять по адресу: п/о Кожла-Сола. Звениговского района, Марреспублики, Поволжский Лесотехнический Институт.

К сведению руководителей и бухгалтеров хозяйственных и кооперативных организаций и предприятий.

Согласно инструкций НКФ СССР от 28/III — 1939 года за № 178/36 и от 14/VI—41 г. за № 504/75, все государственные, хозяйственные и кооперативные организации и предприятия гор. Чебоксары—плательщики налога с оборота и налога с нетоварных операций обязаны представить в Чебоксарский Горфо (сектор госдоходов) годовые отчеты за 1942 год по исчислению указанных выше платежей, не позднее сроков, установленных вышестоящими организациями для представления годовых балансов за 1942 г.

За непредставление или несвоевременное представление годовых налоговых отчетов руководители предприятий и лица, на которых возложена обязанность составлять и представлять налоговые отчеты, подлежат штрафу в размере до 100 руб. с каждого.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРФИНОТДЕЛ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 608 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.